Демографи ыйтăвёсемпе

Туйсем кёрлеççё, ачасем çураласçё...

Муркаш районён администраци çурчё умне капăр машинăсем эрне вёçёнче уйрăмах нумай пуçтарăнаççё. Мёншён тетёр-и? Ку ыйтăвăн хуравё питё кёске – туй. Çапла августăн 8-мёшёнче пёрин хыççăн тепри килсе тăчёç кунта пёрлешекен мăшăрсен машинисем. «Виçё саккăр çулёнчи» лару-тăру пирки вара район администрацийён ЗАГС пайён ертӳçинчен М.П. РУБЦОВАРАН ыйтмасăр чун чăтмарё.

– Çав кун районта пурё 10 çемье чăмăртанчё, – пёлтерчё Маргарита Петровна. – Эрне кун виçё «8» пулнăран мăшăрланакансем çемьере телей, ăнăçу ытларах пулё тесе шутларёç пулас. Анчах та ытларах чух çемьесене çирёп юрату тата пёр-пёрне хисепленипе ăнланни пулăшать. Çамрăксем вара цифрăсенче те пёлтерёшё пуррине шанаççё. Темёнле пулсан та эпир пирён пата мăшăрланма килекенсене яланах хавас.

– Çичё уйăх сисёнмесёрех хыçа юлчё. Çак вăхăтра пирён районти демографилле лару-тăру та, паллах, улшăнчё ёнтё. Çемьесем нумай чăмăртанчёç-и çак тапхăрта?

– Январь-июль уйăхёсенче пирён ЗАГС пайёнче 94 çемье йёркеленчё. Пёлтёрхинчен 16 сахалрах. Муркаш тата Оринин ял тăрăхёсенче пёрлешекенсен шучё чи пысăкки – 12-шер. Апла пулин те уйрăлакансен шучё савăнтармасть-ха. Çак вăхăтра 45 çемье саланнă, ку вăл пёлтёрхинчен 16 нумайрах.

Августăн саккăрмёшёнчех эпир 100-мёш çемье йёркеленнине регистрацилерёмёр. Наталья Александровнапа Вячеслав Алексеевич Кирилловсем пулчёç вёсем. Шупашкарта пурăнакансем Муркаша çитни малтанах тёлёнтерчё. Пулас арăмне парне тăвас тесе Вячеслав ăçта кăна çитмен пуль! Анчах та Канашри, Кӳкеçри, Çёрпӳри ЗАГС пайёсенче çак кун мăшăрланасси пирки калаçни кăлăхах пулнă ун. Çапла вара çамрăк мăшăр хăйсен пурнăçёнчи çёнё тапхăра кёнё чух Муркаш çёрё çинче пулчё.

– «Аистсем» тата Муркашсене çичё уйăх хушшинче миçе пепке парнелерёç?

- Çичё уйăх хушшинче пурё 215 ача çут тёнчене килчё: 94 арçын ача, 121 хёр ача. Муркаш ял тăрăхёнче ыттисенчен ытларах – 33 ача çуралчё. Чи сахалли – 4 ача Уйкас Янасал ял тăрăхёнче. Районти пепкесем хушшинче Максим, Алексей, Данил, Никита, Дарья, Валерия, Анна, Виктория – чи анлă сарăлнă ятсем. Июль уйăхёнче пирён районти иккёмёш йёкёрешсам те кун çути курчёç. Вёсем – Чемейри Нелли тата Нонна. Кинора вылякан Нелли Уваровапа Нонна Мордюкова пекех чапа тухмалла пултăр ёнтё вёсен те.

- Ачасем çуралнипе пёрлех пирёнтен ёмёрлёх уйрăлса каякансем те, паллах, çук мар. Вёсен хисепё кăшт та пулин чакать-и?

– Вилекенсен хисепё кăшт чакни курăмлă тесе каламалла. 376 çын – 190 арçын тата 186 хёрарăм çёре кёнё иртсе кайнă çичё уйăх хушшинче. Пёлтёрхи çак тапхăрпа танлаштарсан ку 19 сахалрах. Анчах та вёсен хушшинче пенси вăхăтёччен те пурăнайман арçынсем 90 процента яхăн, хёрарăмсем – 14 процент чухлё. Хăвăрах куратăр ёнтё, çамрăкла вилекенсем сахал мар. Чи кӳренмелли вара – 16 çула çитмен 2 ача вилни. Чир-чёрсене пула çёре кёнё хёрарăмсен шучё 160-па, арçынсен – 118-па танлашать. Ку çулла шыва путса вилнисем пурё 9 çын. Çаплaрах лару-тăру паян пирён Муркаш Енре.

– Тавах, Маргарита Петровна.

Н. НИКОЛАЕВА
калаçнă.

Пиллёкмёш ёç чёрёкё

Вăхăта усăллă ирттереççё

Каникул вăхăчё тахçанах ёнтё нумай шкул ачисемшён «лагерь» сăмахпа пёр танах пулса тăчё. Çак пиллёкмёш ёç чёрёкё епле пыни пирки район администрацийён вёрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайён ертсе пыракан специалисчёпе Алина Николаевна ДАНИЛОВАПА сăмах пуçартăм:

– Çуллахи вăхăтра кăçал районти шкулсем çумёнче мёнле лагерьсем ёçлерёç? Вёсен хисепё нумай пулчёи?

– Каникул вăхăтёнче тёрлё енлё лагерьсем ёçлерёç: шкул çумёнчи сывлăха çирёплетмелли тата профильлё лагерьсем пурё 40, ёçпе кану лагерёсем 25. Ытларахăшё 1-мёш сменăра пулчёç. 2-мёш сменăра Чуманкассинчи, Юнкăри вăтам тата Шетмёпуçёнчи тулли мар вăтам шкулсем çумёнчи сывлăха çирёплетмелли 3 лагерь ёçлерё. Çавăн пекех 2-мёш сменăра Чуманкасси шкулёнче ёçпе кану лагерне те йёркелерёç. 3-мёш смена пирки калас пулсан каллех Чуманкассисене палăртмалла: кунта август уйăхёнче те икё лагерь ёçлет. Çапла вара çуллахи вăхăтра пурё 1893 ача лагерьсенче канма тата ёçлеме пултарчё.

Лагерьсем хăйсен ёçне лайăх туса пычёç темелле. Унта ачасене интереслё пулнине «Çёнтерӳ ялавён» страницисенче те курма пултартăмăр. Ачасем хаваспах хăйсен шухăшкăмăлёсене пёлтерсе тăчёç.

– Çакăн пек лагерьсене ытларах мёнле ачасене çӳреттерме тăрăшаççё?

– Тӳрех каламалла, чи малтанах лагере сахал тупăшлă, тулли мар çемьесенчи ачасене тата тăлăх ачасене явăçтарма тăрăшнă. Çавăнпа та лагерьсенче кирлё условисем туса панă: апатлану енёпе те, кану енёпе те. Паллах, ёçре те ачасем хăйсене лайăхипе çеç кăтартрёç. Унта çӳрекенсем çывăхри хуçалăхсене пулăшрёç, шкулсен пахчисенче те тăрăшсах ёçлерёç. Эмел курăкёсем пухас ёçе те хутшăнчёç.

Лагерьсен ертӳçисем яваплăха туйса ёçлерёç. Воспитательсем те ачасене кашни кунах интереслентерме тата хавхалантарса пыма пултарчёç.

– Ачасем çав вăхăтрах тёрлё конкурссене те хутшăнчёç пулё-ха?

– Çапла, конкурссене хутшăнма вёсем яланах хавас. Лагерьсем ёçленё вăхăтра вёсен ёçне-хёлне хаçатра çутатса тăрассипе «Ылтăн калем» конкурс пычё. Пур лагерь ёçне те вёрентӳ пайне тăратнă альбомсем тăрăх çак кунсенчех хаклăпăр. Кăçал 4-мёш хут ёç бригадисем хушшинче иртнё Спартакиадăра Кашмашсем çёнтрӳçё пулчёç, кубок çёнсе илчёç.

Республика шайёнче иртнё конкурссенчен те пăрăнса юлмарăмăр. Шкулти лесничествăсен конкурсёнчен Юнкăсен «Лесовичок» профильлё лагере çӳрекенсем 1-мёш вырăнпа таврăнчёç. Тата ытти тёрлё конкурссене те хутшăнма вăхăт тупрёç лагерь ачисем.

– Çуллахи вăхăта ачасем хăйсен шкулёсенчех лайăх ирттереççё. Анчах та хăш шкулти лагерьсене уйрăммăн палăртма пулать?

– Ачасемпе ёçленё чух яланах пысăк яваплăх пулмалла. Çакна лагерьсен начальникёсем тата воспитателёсем мала хурса ёçлерёç темелле. Ёçе йёркелессипе тата ăна пурнăçа кёртсе пырассипе вара манăн Кашмашсене, Юнкăсене, Нискассисене, Калайкассисене, Чуманкассисене, Тивёшсене тата Москакассисене палăртса хăварас килет. Çак лагерьсем уйрăмах лайăх ёçлесе пычёç çу вăхăтёнче.

– Тавах калаçушăн.

Н. НИКОЛАЕВА

Милици хроникинчен

Пурнăç-и ку?

«Юратăва пур вăхăт та парăнать» тенё пекех арăмёпе упăшки тытăçса çапăçни те пур вăхăтрисене те пырса тивет пулас. Акă Шетмёпуçёнче пёри çапла арăмёпе килёштереймен. 1947 çулта çуралнăскер хăй тахçан «кăвакарчăнăм» текеннинех сенёкпе вёлерессипе хăратнă. Паллах, кунашкал «вăйлă» арçынтан хёрарам хăрамаллипех хăранă. Сенёклине вара Раççей Федерацийён Уголовнăй Кодексё чётреме ертнё.

Çамрăксем те ку енпе аптăрасах кайманни курăнать. Çирём çула та çитмен çамрăк хёрён пёрле пурăнакан арçынпа милицие пёлтеричченех хирёçмелли тупăннă. Хăйёнчен 3 çул аслăрахскерпе çемье çавăрни çинчен паспортра пичет çук. Апла пулсан хёрён шутлама та вăхăчё пур-ха. Юнкă ял тăрăхёнче каччăсем çук мар пуль. Ку «киккириклё» арçынăн вара административлă майпа явап тытмалла пулать.

Мунчара çăвăнаççё е ...?

Вăтăра çывхарса пыракан икё Муркаш «паттăрё» малтанах калаçса хурса Уйкас Хачăкри пёр хёрарăмăн хуçалăхёнчи мунчана çул тытнă. Унта çăвăнса тасалма кайман вёсем, «пуйма» пулăшакан япаласем çавăнта пуррине пёлнё. Хёрарăма 40 литрлă алюминирен тунă икё бидонсăр, çавăн чухлех кёрекен икё алюмини хурансăр тăратса хăварнă. Пахчара тата тепёр хуран ларнине курсан ăна та хăйсенех илнё. Çапла вара килти хуçалăха 2800 тенкёлёх сиен кӳнё. Халё вара вёсен тёлёшёпе РФ УК 158-мёш статйин иккёмёш пайёпе уголовнăй ёç пуçарас ыйту тăрать.

Пичете районти шалти ёçсен пайён материалёсем тăрăх хатёрленё.

Продаю коров: красно-пеструю, один отел – 10 л., черно-пеструю, восемь отелов – 20 л. Тел.: 2-25-78.

Пёлтерӳсем. Объявления

Куплю старинные монеты, самовары. Дорого. Тел.: 8-910-388-01-61; 8-960-190-67-34. 4-8.

КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения, выдает займы. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 6-20.

Реализуем гравмассу по цене 650 руб. за 1 тонну (г. Ядрин). Тел.: 89053406163; 89603002162, Владимир. 2-5.

Цемент М–400 в мешках 40 кг. оптом и в розницу, доставка.Тел.: 8-927-849-76-75; 8-927-849-76-74. 3–5.

Реализуем: кольца для колодцев ж/б, армированные 0,7м, 1,0 м, 1,5 м. Крышки, днища к ним, столбы ограждения 1,9 м, 2,2 м, фундаментные блоки. Доставка манипулятором. Тел.: 8-902-327-82-52. 8-16.

Продаю кирпич: силикатный, красный одинарный М-150, М-125, красный полуторный пустотный М-125, КББ, керамзит, гравмассу, красный половняк. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 10-14.

ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, трубы на забор и ворота. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, плодокомбинат). 2-6.

СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95 . СПУТНИКОВЫЙ ИНТЕРНЕТ. 3-8.

Куплю старинные монеты с чувашского национального костюма, дореволюционные награды. Тел.: 8-902-300-39-08. 2-2.

Продаю автомашину ВАЗ-21099 1994 года выпуска, цвет красный, есть сигнализация, музыка или продаю на запчасти. Тел.: 89276658806; 89636693325.

Управление Роснедвижимости по Чувашской Республике (субъект Российской Федерации) сообщает, что руководствуясь пунктом 3 статьи 43, пунктом 2 статьи 47 Федерального закона от 24 июля 2007 года № 221-ФЗ «О государственном кадастре недвижимости» с 1 марта 2008 года по 01.01.2010 года организации технического учета и технической инвентаризации объектов капитального строительства в целях, связанных с осуществлением государственной регистрации прав на недвижимое имущество и сделок с ним, выдают кадастровые паспорта зданий, сооружений, помещений объектов незавершенного строительства.

Кадастровые планы, технические паспорта, иные документы, которые содержат описание указанных объектов и выданы в установленном законодательством Российской Федерации порядке, до дня вступления в силу указанного Федерального закона в целях, связанных с осуществлением соответствующей государственной регистрации прав на недвижимое имущество и сделок с ним, признаются действительными и имеют равную юридическую силу с кадастровыми паспортами таких объектов.

Продаю блоки керамзитобетонные, цемент М 400, М 500, гравмассу, песок речной, щебень кирпичный, щебень гранитный. Имеется в продаже пшеница, ячмень. Обращаться по адресу: (Моргаушский плодокомбинат): тел.: 8-919-666-55-77; 8-917-661-93-11; 2-18-80. 1-3.

ПРОДАЮ обрезные, необрезные доски от 2 м. до 6 м., штакетник, горбыль. Все в кредит!!!. Трубы б-у, дрова обрезки бесплатно! Тел.: 8-905-345-31-09.

Суд залёнчен

Вăрăн çулё вăрăм пулман

2008 çулхи июлён 10-мёшёнче Муркаш район сучё 1949 çулхи декабрён 26-мёшёнче Шупашкарта çуралнă, малтан судпа айăпланман В.Н. Никитинăн ёçне пăхса тухнă.

Ниçта та ёçлемен, пёр вырăнта пурăнман В. Никитин çёрлехи 11 сехет тёлёнче Москакасси ял тăрăхне кёрекен Ивановка ялё çывăхёнчи питомникра «хуçаланса çӳренё». Вăл ЧР Шыв ресурсёсен тата экологи министерствин «Опытный лесхоз» патшалăх учрежденийён лесник пӳртне çăрана çёмёрсе кёрет. Кунтан вăл йывăçран тунă кёреçе вăрласа тухать. Кунпа кăна лăпланмасть вăрă. Çак территоринчех вырнаçнă утарçăн пӳртне те çăрана ватсах кёрет. Унтан вара мён кăна «çаклатса» тухмасть пуль: вёллесем валли хатёрленё ăшă тытмалли 2 минтер, вырăн çивиттийёсем, утиял, хуран тата ытти нумай япаласем çёнё «хуçа» аллине лекеççё. Çёр улми, тăвар, шăратнă çу... – веçех самантрах пӳртрен çухалать...

Хăйне пурăнма кирлё япаласене вăрланипе лайăх пурнăç пуçланасса шаннă-ши вăл? Çав вăхăтра пёртте малалла мён пуласси пирки шутламан пулас кукăр алă. Ахăртнех хăйне валли «йăва çавăрса» малалла та вăрă ёçёпе тăранса пурăнас тенё ёнтё. Анчах та кун пеккисем инçе каяймаççё çав...

В. Никитинăн та суд тенкелё çине ларма тивет: унччен шутласа туман ёçсем куç умёнчех-çке. Вăрланă япаласем те йёп пек çухалаймаççё. Çав каç В. Никитин çӳлерех асăннă патшалăх учрежденине пурё 1976 тенкёлёх тăкак кӳрет. Ана хăй те хирёçлемест. Хрёçлемест кăна мар, суд пăхса тухмасăрах хăйне вуласа панă приговора йышăнни çинчен калать. Адвокатпа канашласа илнё хыççăн та хăйён шухăшёпех юлать. Хăй айăпне йышăннă В. Никитин киревсёр ёç тунăшăн ўкённине те пёлтерет.

Çапла вара суд Раççей Федерацийён Уголовнăй Кодексёпе килёшӳллён ăна икё преступлени тунипе айăпласа 2 çул та 1 уйăхлăх ирёкрен хăтарма йышăнать, 280 тенкёлёх штраф парать, çак условисенче вăрă ёçне пурнăçланă çын тӳрленессе шанать.

А. КАБУРКИН,
районти шалти ёçсене пайён следстви уйрăмён аслă следователё, милици аслă лейтенанчё.

Тав тăватпăр

Юратнă аннене, Кашмаш ялёнче пурăннă Ольга Александровна Ярикована юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, çак пысăк хуйхăна пирёнпе пёрле пайланăшăн пирён тăвансене, хурăнташсене, тус-юлташсене, ял-йыша, кӳршёсене, çавăнпа пёрлех Т.А. Скворцова фельдшерицăна медицина пулăшăвёпе тивёçтернёшён чёререн тав тăватпăр.

Яриковсен çемйи.

Моргаушская районная газета «Çёнтерӳ ялавё»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Зам. гл. редактора В.Л. ШАПОШНИКОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 19.08.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3594.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.